# ПЕРЕМЕНКА

№ 13

АПРЕЛЬ, 2023

## ШКОЛЬНЫЕ СОБЫТИЯ

********************************

**Чăваш чĕлхи кунне уявларăмăр……………………………………….....2**
**Пултарулăхăмăр…………………………………….3**
**Хисеплĕ вĕрентекенĕмĕре тав тăватпăр……………4**
**Паттăр салтак ячĕпе аллея уçăлчĕ…………………..5**

Школьная газета основана
в феврале 2022 года
Основатели:
Ермошкина Раиса Николаевна
Сютова Кристина Васильевна

# ПЕРЕМЕНКА

«Эпир – И.Я. Яковлев мăнукĕсем». Çак ятпа иртрĕ паян Санарпуç вăтам шкулĕнче аслă вĕрентекенĕмĕр, халăхăмăра çутта кăлараканĕ, пирĕн ырă çыннăмăр И.Я. Яковлев çуралнăранпа 175 çул çитнине халалланă уяв. Шкул ачисем унта хастар хутшăнчĕç:
5-мĕш – 6-мĕш класра вĕренекенсем И.Я. Яковлев пирки анимациллĕ мультфильма пăхрĕç, ăна сӳтсе яврĕç. Унăн «Йăлăнтармăш», «Тилĕ тус», «Кăлăх тавлашакансем» калавĕсем тăрăх инсценировка лартса пачĕç. Çавăн пекех Большаков Аркадий, Тимофеева Анна тата Дмитриева Ксения «Хĕрлĕ Калпак е «Тавăрпи» юмах инсценировкинче пултарулăхне кăтартрĕç.
8-мĕш классем «И.Я. Яковлев – чăваш халăхне çутта кăлараканĕ» фильма пăхнă хыççăн викторина валли ыйтусем хатĕрлерĕç,
9-мĕш классем вара пуç ватмăша хăвăртах шутласа пĕтерсе И.Я. Яковлев ачалăхĕ пирки каласа пачĕç, Вĕрентекенĕмĕр хайлавĕсене вырăсларан чăвашла куçарчĕç – «ăста тăлмачăсем» ята çĕнсе илчĕç. Маттурсем!



# ПЕРЕМЕНКА



Кам-ха вăл вĕрентекен? Ман шутпа, вĕрентекен – кашни ача шăпинче ырă йĕр хăваракан, кашни ачана унăн ăс-тăнĕпе кăмăлне çирĕплетсе, пултарулăхне аталантарса пурнăç çулĕ çине тăратакан. Вăл пирĕншĕн – çывăх та юратнă çын.

Кашни çыннăн пурнăçĕнче вĕрентекен пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Пирĕн шкулта питĕ лайăх учительсем пур. Мана ытларах Марина Анатольевна килĕшет. Вăл хура çӳçлĕ, хăмăр куçлă, питĕ кăмăллă, илемлĕ, йăрăс пӳллĕ. Марина Анатольевна истори, обществознани предмечĕсене вĕрентет. Çирĕп ыйтать. Уроксенче питĕ нумай дата тата событи пĕлетпĕр. Вăл тăрăшнипе вĕренекенсем районти олимпиадăсене хутшăнаççĕ, лайăх вырăнсем илеççĕ.

Александрова Дарья, 7-мĕш класра вĕренекен



Ман юратнă учитель вăл Скворцов Валерий Геннадьевич. Вăл шкулта технологи урокĕсене ертсе пырать.

Ылтăн алăллă çын пулнăран Валерий Геннадьевича шкулта пурте хисеплеççĕ. Вăл ăсталама пĕлмен япала çук та пуль: пуртă avri тумалла-и унта, пăчкă шăлĕ хăйрамалла-и е пĕр-пĕр станокпа ĕçлемелле-и… Ун алли пултаракан ĕç-хĕлĕн вĕçĕ-хĕрри те çук…

Кĕреçе, щетка avri лартма та, ывăс тума та, пуртăпа каскалама та вĕрентĕмĕр.

Валерий Геннадьевич урокĕсем – пурнăç урокĕсем. Вĕсем пирĕншĕн – ĕмĕре!!!

Антонов Алексей, 9-мĕш класра вĕренекен



# Слова благодарности учителю начальных классов Ильиной Надежде Леонидовне от учеников 1 класса

Спасибо за светлые дни на уроках,
спасибо за помощь на сложных
дорогах, спасибо за мудрость, за
дельный совет, за понимание.

Уважаемая Надежда Леонидовна! Огромное спа-
сибо вам за ваш труд, за душевность и
мудрость. Желаем крепкого здоровья, уважения,
процветания и счастья на долгие года!

Спасибо большое Надежде Леонидовне,
за то, что вы многому меня учите.
Я научился писать, читать. Каждый
день получаю от вас что-то новое




# Паттăр ячĕпе аллея уçрĕç

Çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче, Аслă Çĕнтерӳ 78 çул тултарнă кун, Санарпуç вăтам шкулĕн 6-мĕш класĕнче вĕренекенсем Кăмаш ялĕнче çуралса ӳснĕ Александр Никонов – Украинăра пулса иртекен спецоперацие хутшăнса пуçне хунă çар çыннин, Раççей Федерацийĕн «Барс» ятпа çӳрекен 26-мĕш ятарлă отряд разведчикĕн вил тăприйĕ çинче пулса курчĕç. Ачасем палăк умне чечек çыххи хучĕç, çапăçура хăюлăх кăтартса Крап беретне тата Паттăрлăх орденне тивĕç пулнă ентешĕмĕрĕн - А.В. Никоновăн - хисеплĕ ятне çӳллĕ шайра тытма сăмах пачĕç!

Çак кун паттăр салтак ячĕпе Ас тăвăм аллейи уçăлчĕ. Мероприятире Мăн Турхан тăрăхĕн вырăнти пуçлăхĕ Григорьев О.В., районтан килнĕ хаклă хăнасем Фирсов А.Н., Ермошкин С.А., А. Никоновăн тăванĕсем, юлташĕсем хĕрӳллĕ сăмах каларĕç, çамрăк ăрăва таса чунлă, шанчăклă юлташ пулма, шкул чысне çӳллĕ шайра тытса пыма, аслă Раççейшăн, тăван Чăваш Еншĕн тӳр кăмăлпа ĕçлесе пурăнма, тăван çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн çапăçса пуçĕсене хунă паттăрсен ячĕсене яланах асра тытма, Раççейăн тивĕçлĕ гражданĕсем пулма чĕнсе каларĕç.
А.В. Никонов ячĕпе хисепленсе тăракан отряд ятĕнчен Большакова Т.Б. «Вĕлкĕшет ялав, вĕлкĕшет» калавпа паллаштарчĕ. Хайлав кашни çын чун-чĕри витĕр тухрĕ, куçран куç çулĕ тумлатрĕ - хастарлăх туйăмне вăратрĕ. Аллейăна асăнмалăх туя йывăççи - Александр салтакăн вилĕмсĕрлĕхне кăтартса паракан «пурнăç йывăççи» - лартрĕç. Паттăрсен ячĕ, çутă сăнарĕ яланах халăх чунĕнче упранĕ.

6-мĕш класс маттурĕсем Александр Никоновăн çуралнă кил-çуртĕнче хăнара пулчĕç, унăн пӳлĕмĕнче пулса курчĕç. А. Никонов ашшĕпе амăшĕ Виталий Александровичпа Галина Дмитриевна Сашăн ачалăхĕпе, çар хĕсметĕнчи пурнăçĕпе паллаштарчĕç. Ачасем хăйсен пурнăçĕнче пĕрремĕш хут бронежилет тытса курчĕç, салтакăн тĕрлĕ-тĕрлĕ тум-тирне пăхса тĕлĕнчĕç.

Тараватх кил хуçисем çамрăксене сĕтел хушшине лартса хăна турĕç, тутлă апат-çимĕçпе сăйларĕç.

Çак кун çамрăк ăру асĕнче яланлăхах тăрса юлĕ! Çĕре çити пуça таятпăр Сирĕн умăрта, хисеплĕ салтак амăшĕ, хисеплĕ салтак ашшĕ!

